24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
23
ВЫРСАРНИКУН
277 (5992) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Предприятисенчи стахановла шкулсем

Пирĕн предприятисемпе организацисенчен квалификациллĕ рабочисен пĕр пайĕ отечественнăй аслă вăрçăн фронтне тухса кайрĕ. Вĕсен вырăнне ĕçлеме фабрикăсемпе заводсене çĕнĕ рабочисемпе работницăсем, колхозниксем, килхуçи хĕрарăмĕсем станоксем умне пырса тăчĕç. Çамрăк рабочисемпе работницăсене тухăçлăн ĕçлеме, технологи процесне вĕренме пулăшас задача çивĕччĕн тухса тăчĕ.

Çак задачăна пирĕн республикăри нумай предприятисем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Шупашкарти «Ленин ячĕпе тăракан фабрикăна Демидова, Аршинова, Малкова тата ытти работницăсем çĕвĕ ĕçне вĕренме пырса кĕнĕ. Демидова юлташ халĕ хăй тĕллĕнех машинăпа ĕçлеме пуçларĕ. Вăл ĕç нормине 150 процент таран тултарса пырать. Ытти работницăсем те çĕнĕ профессие вĕренсе алла илме тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсене панă заданисене пысăк пахалăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

Горпромкомбинат та çĕнĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе кулленех туса пырать. Сĕтел-пукансем тăвакан цех начальникĕ Маркелов юлташ халĕ 3 çынна вĕрентет. Маркелов юлташ кунта 14 çул ытла ĕçлет. Вăл хăйĕн çĕнĕ тĕплĕн пĕлет. Хăйĕн пысăк опытне ученисене парса, вĕсене кĕске вăхăтрах квалификациллĕ рабочисем туса кăларма тăрăшать. Çак кунсенче унăн икĕ ученикĕ техминимум программине вĕренсе пĕтерсе мастер ятне илеççĕ.

Паллах, станокпа ĕçлеме кăна вĕренни пысăк çитĕнÿсем туса ĕçлеме çитĕлекĕр. Маркелов юлташ хăйĕн ученикĕсене ĕç пĕтернĕ хыççăн йывăç технологине, станоксене мĕнле тунине тимлĕн вĕрентет. Ку ĕçре ăна техник Кострикова юлташ та чылай пулăшса пырать.

Çăматă тăвакан цехра та çĕнĕ рабочисене вĕрентес тĕлĕшпе чылай çитĕнÿсем туса пыраççĕ. Ку цехра нумаях пулмасть темиçе çынна вĕрентсе квалификациллĕ мастерсем туса кăларчĕç. Халĕ вĕсем пурте хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕ нормăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Çамрăк мастер Нина Агачова, иккĕмĕш разрядпа ĕçлекенскер, 7-мĕш разрядпа ĕçлеме вĕренет, çав вăхăтрах вăл хăй çумне çирĕплетнĕ çĕнĕ рабочие вĕрентсе пырать. Ф. Первенек, А. Максимов юлташсем те ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Цехри мастерсем пурте çĕнĕ рабочисене вĕрентсе пыраççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа мастерсем кашнинех иккĕр ученик вĕрентсе кăларнă. Цех начальникĕ Смолов юлташ халĕ 4 çынна вĕрентет. Цехри рабочисемпе работницăсем Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăн тата лайăхрах ĕçлеме хавхаланчĕç. Вĕсен мирлĕ вăхăтри нормăпа куллен 60 мăшăр çăматă тумалла пулнă пулсан, вăрçă вăхăтĕнче 60 мăшăр тума пуçларĕç. Халĕ вĕсене çĕнĕ норма панă. Рабочисемпе работницăсем çак çĕнĕ нормăна та ăнăçлăн пурнăçлама тăрăшаççĕ. Мастер Д. Федосеева юлташ хăшпĕр кунсенче нормăна 200 процента яхăн тултарса ĕçлет.

Çĕрпÿри примус горелкисем тăвакан заводра та çĕнĕ кадрсене хатĕрлес ĕç начар мар пулса пырать. Кунта вăрçă пуçланнăранпа темиçе çынна машинист специальносне вĕрентнĕ. Матросов юлташ машинистăн специальносне вĕренсе, халĕ ĕç нормине 200-шер процент тултарса пырать. Квалификациллĕ ватă рабочисем нумайĕшĕ çĕнĕ специальноссем вĕренсе илеççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке тăвакан артельте 70 çултан иртнĕ ватă рабочи Оленин юлташ кăçалччен ĕçлемен ĕçе хăвăрт вĕреннĕ, халĕ нормăна 140—160 процент таран пурнăçласа пырать. Кунсăр пуçне вăл хăйĕн специальносне пĕр хĕрачана вĕрентет.

Çĕнĕ кадрсене васкавлăн хатĕрлес ĕçре предприятисем çумĕнче стахановла шкулсем тата кĕске сроклă техминимум курсĕсем организацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав шкулсенче чи опытлă стахановецсем, инженерно-технически работниксем, пысăк опытлă ватă рабочисем активлăн хутшăнса ĕçлени кирлĕ. Çĕнĕ рабочисене çăмăл ĕçсенчен вĕрентме пуçласа, кăткăсрах ĕçсем çине хăвăртăн куçарса пымалла. Станоксем умне тăнă çĕнĕ рабочисене кĕске срокрах квалификациллĕ рабочисем тума пур майсемпе те усă курмалла. Предприятисенчи директорсемпе парти тата профсоюз организацийĕсен çĕнĕ рабочисене вĕрентес ĕçе куллен ертсе пымалла.

Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладĕнче—фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ, тесе каларĕ. Вăл пирĕн предприятисенчи рабочисем. пе служащисене, арçынсемпе хĕрарăмсене шăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнчĕ. Хамăрăн аслă çулпуçăн чĕнĕвне пирĕн совет патриочĕсемпе патриоткисем ниçăçанхи пек мар пысăк çĕкленÿпе пурнăçлама тытăнчăç.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн фашистла çынçиенсене хирĕç вилĕмле çапăçнă вăхăтра предприятисенчи патриотсем тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине пурне те туса парĕç. Çавна тума пирĕн промышленность предприятийĕсенче квалификациллĕ рабочисем çителĕклĕ пулмалла. Çавăнпа та рабочисен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе пирĕн ырми-канми ĕçлемелле, çак ĕçре вара стахановла шкулсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Ноябрĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă. Фронтăн Ростов (Дон çинчи Ростов), Волоколамск тата Тула участокĕсенче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче немĕçсенне 8 самолет пĕтерсе тăхнă.

Баренцово тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 3 транспортне путарнă, вĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ Информбюрон ноябрĕн 20-мĕшĕнчи пĕлтерĕвĕнче калана пек 1.900 тонна мар, 19.000 тонна пулнă.

* * *

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче фронтăн Хĕвеланăç тата Ростов (Дон çинчи Ростов) участокĕсенче çапăçакан пирĕн авиаци чăсĕсем немĕçсенне 65 танк, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 270 ытла автомашинăна, противник пехотине икĕ батальон ытла тата кавалерин пĕр эскадронне пĕтерсе тăхнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чăссем, ноябрĕн 20-мĕшĕнче противника хирĕç вăйлăн çапăçса, туллимар даннăйсем тăрăх, немĕçсенне 60 танк, войскăсем тиесе пыракан 70 ытла автомашинăна, пулеметсемпе минометсен темиçе йăвине пĕтерсе тăхнă, тăшман пехотине 4 батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан Козик командирăн подразделенийĕ икĕ эрне хушши пынă вăйлă çапăçусенче противника пысăк çухату кÿнĕ. Фашистсен 1.500 çын вилнĕ. Пирĕн войскăсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене нумайĕшне тыт. кăна илнĕ.

* * *

Мускав облаçĕн немĕçсем тытса илнĕ районĕсенчи партизансем хăюллăн кĕрешсе, Мускава сыхлама тата немĕç оккупанчĕсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Райисполком председателĕ П. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ немĕçсен икĕ штаб машинине, вĕсемпе пĕрле фашистсен 12 офицерне пĕтерсе тăхнă. Çак отряд Н. ялĕ патне ирĕксĕр анса ларнă «Мессершмитт-109» йышши самолета сунтарса янă, телефонпа телеграф сыхăнавĕн пысăк вырăн йышăна тăракан линине пĕтерсе тăхнă. Партизансен У. юлташ ертсе пыракан тепĕр отрячĕ темиçе кун хушшинчех немĕçсенне 3 автомашина, бензин тултарнă автоцистерна, снарядсем тиенĕ темиçе лава пĕтерсе тăхнă, немĕçсен 20 салтакĕпе 7 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансен З. юлташ ертсе пыракан группи ноябрĕн 9-мĕшĕнче немĕçсен канма чăрăннă танкисчĕсем çине пырса тапăннă та 7 танкăн экипажне пĕтернĕ. Партизансен Г. юлташ ертсе пыракан отрячĕ тăшмана хирĕç пăттăрăн кĕрешет. Партизансем темиçе кун хушшинче противникăнне салтаксем ларса пыракан виçĕ автомашинине пĕтерсе тăхнă, «Хейнкель-111» йышши самолетне çунтарса янă. 80 салтака, 4 офицера вĕлернĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче партизансен К. юлташ ертсе пыракан группи фашистсен 50 çынран тăракан отрячĕ çине хăюллăн тапăннă. Кĕске вăхăт хушшинчех совет патриочĕсем немĕçсен виçĕ офицерне тата 19 салтакне вĕлернĕ. Ытти фашисчĕсем тарса пĕтнĕ. Çапăçу хыççăн партизансем сыхăну линине темиçе вырăнта пăснă, стратеги енĕпе кирлĕ çул çине минăсем хурса тухнă. Минăсем çине пырса перĕнсе, тăшманăн темиçе танкĕ арканнă.

* * *

Противник тытса илнĕ Орел хулинчен пирĕн чăссем вырнаçса тăнă çĕре килнĕ совет граждăнĕсем немĕçсен фашистла мерзавецĕсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Токарь Васнецов юлташ çапла каласа парать: «Гитлер бандичĕсем Орел хулин варринче виселица турĕç. Чи пирвай вĕсем хăйсене хирĕç тăнă старика çакса хучĕç. Унпа юнашар темиçе çынна фашистсене валли ăшă япаласем «пухас ĕçе» хутшăнманшăн çакса вĕлерчĕç». Учитель Варламов юлташ çапла каласа парать: «Орел хулин нумай урамĕсенче айăпсăрах асаплантарса вĕлернĕ çынсен виллисем йăваланса выртаççĕ. Фашистла бандитсем урампа иртсе пыракансене тытса чараççĕ те вĕсен çинчен ăшă тумтирсене, урана тăхăнмалли япаласене хывса илеççĕ, укçасемпе хаклă япаласене туртса илеççĕ. Кăшт та пулин хирĕç тăрсанах, фашистсем персе вĕлереççĕ. Килсемпе магазинсене çаратса пĕтернĕ. Халăх выçă ларать». Диспетчер арăмĕ Корчевская юлташ фашистла разбойниксен чугунçул поселокĕнчи тискер ĕçĕсем çинчен çапла каласа панă: «Поселокри пĕр урамра фашистсем чугунçул çинче ĕçлекенсен ачисен ушкăнне тискеррĕн вĕлерчĕç. Бандитсем 8 çултан пуçласа 11 çула çити 9 ачана персе пăрахрĕç».

* * *

Юхăнса пăтнĕ Италирен Германи валли продовольстви турттарасси ÿсех пынине пула Италире апат-симĕç ситменни ытларах та ытларах палăрать. Римри магазинсенче куллен кирлĕ пулакан таваресене тупма çук. Кăшт та пулин пахча-симĕç илес тесен, хула халăхĕн кунĕпех черетре тăрас пулать. Римри ресторансенче пуринче те тахçанах какайран хатĕрленĕ япаласем тупса çиме çук. Симĕçсен хакĕ питĕ ÿссе кайнă. Спекулянтсем пысăк услам илеççĕ. Итали хулисен урамĕсенче час-часах выçăпа вилнĕ çынсен виллисене курма пулать.

### Ноябрĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Дарбиньян юлташăн чăсĕнчи боецсем ноябрĕн 20-мĕшĕнче хăюллă атака туса тăшмана вăйлăн пырса çапнă. Çапăçу хирĕнче салтаксемпе офицерсен 400 ытла виллисене хăварса, немĕçсем каялла чакнă. Дарбиньян юлташăн чăсĕ 7 оруди, 13 пулемет, винтовкăсем, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Раковин юлташăн чăсĕнчи артиллери батарейи пĕр кун хушши пынă çапăçусенче немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 6 ДОТ-а тата противник пулемечĕсен 4 йăвине пĕтерсе тăхнă.

* * *

Лопатин командирăн чăсĕ, Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскер, хаяр çапăçура немĕçсен «Викинг» дивизийĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна ытла пĕтерсе тăхнă. Пирĕн войскăсем 11 оруди, миномĕтсен 2 батарейине, боеприпассем тиенĕ 100 çити автомашинăна, штабăн 2 автомашинине тата 2 ялав тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче тытăна илнĕ немĕç салтакĕсемпе офицерĕсем Ленинград патĕнче немĕç чăсĕсем пысăк çухатусем тунă çинчен каласа параççĕ. Парашютистсен 2-мĕш полкĕнчи 1-мĕш батальонри 3-мĕш ротăн ефрейторĕ Вольф—Гант Пройль, фашистла çамрăксен союзĕн членĕ, Польшăра, Норвегире, Голландире тата Крит утравĕ çинче пулма ĕлкĕрнĕскер, каласа пĕлтернĕ тăрăх, парашютистсен 2-мĕш полкĕ Ленинград фронтне октябрь уйăхĕн варринче килнĕ. Немĕç чăсĕсем питех те пысăк çухатусем тунă пирки, квалификациллĕ парашютистсене Шмидт генерал-майорăн танковăй дивизийĕпе пĕрлештернĕ, унтан пирĕн артелĕн пĕрремĕш лавĕсем, вĕсем хыççăн ытти лавĕсем те килĕç».

## Сталин юлташ лартнă задачăсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе пырар!

### Ĕççыннисен активлăхĕ

ВАРМАР. Оборонăн Государственный Комитет Председателĕ И. В. Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада районири ĕççыннисем хушшинче ăнлантарса парасси вăйлансах пырать. Сталин юлташ доклачĕ колхозниксене, служащисене тата рабочисене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать. Вĕсем умра тăракан ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме тата фашистла империалистсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса пыма пуласçĕ.

«Тукас» колхоз членĕсем çулпуç докладне сÿтсе-явнă хыççăн государство умĕнчи обязательствăсене ик-виç кун хушшинче тултарма пулчĕç.

Нумай колхозсенче çĕршыв оборонин фондне заем облигацийĕсене параççĕ. «Ситмĕш» колхоз членĕсем 4000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне панă. Кершин колхозник заем облигацийĕсене 700 тенкĕлĕх, Тимофеев 450 тенкĕлĕх, Власов—150 тенкĕлĕх панă.

«Новая жизнь» колхоз çак кунсенче натуроплата тыррине парса татрĕ.

Сталин юлташ докладне сÿтсе-явнă май районри ĕççыннисем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси вăйланчĕ.

И. СТЕПОНОВ.

### Обязательствăсене тултараççĕ

ШАХАСАН. Уйкас Кипек ялсоветне кĕракен пур колхозсенче те Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладна вĕренессине лайăх организацилеççĕ. Кашни колхозрах агитаторсем пур. Сталин докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе ялсоветĕнче 19 агитатор ĕçлет. Колхозсем тата колхозниксем, çулпуç чĕнĕве ответлесе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри Е. Степанов, П. Никифоров, И. Федоров, И. Васильева тата М. Леонтьев юлташсем государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене парса татрĕç. Е. Степанов колхозник 1942 çулăн аш-какай, су парса татрĕ.

Çавăн пекех Тельман ячĕпе тăракан колхозри Е. Тимофеев, А. Сергеева, Е. Дмитриев колхозниксем те хăйсен обязательствисене тултарчĕç.

Тельман тата Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем укçа-тенкĕ парăмĕсене 100 процентчĕпех парса татнă.

Çĕнĕ Чалкасси ялсоветне кĕракен «Новая жизнь» колхозра та ĕçсем çаван пулса пыраççĕ. Çак колхоз членĕсем ялтуçалăх налогĕ, страховка, самообложени укçисене пурте парса татрĕç.

Колхоз халĕ 1942 çулăн аш-какай парса татрĕ. Çавăн пекех колхозниксем те çитес çулăн аш-какай, сĕт-çу парса татнă.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра Сталин юлташ докладне кăтартулăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхоз 1941 çулăн пур обязательствăсене те тултарнă. Вăрман Енĕшри «Свобода» колхозри Захарова агитатор колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса Сталин юлташ доклачĕ тăрăх 4 хутчен каласурсем ирттернĕ. Матьшÿри «Молодой колхозник» колхозра та Сталин юлташ докладне йĕркеллĕн вĕренеççĕ. В. Соловьева, П. Григорьева учительницăсем çулпуç доклачĕ тăрăх кашни кунах калаçусем ирттереççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

### Пуçарулла çамрăксем

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем Сталин юлташăн докладне тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн производствăра татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç.

Çĕвĕ çĕлекен цехра йăлтах çамрăксем ĕçлеççĕ. Пурте вĕсем нормăна ялан та ытлашшипех тултараççĕ. Ноябрь уйăхĕн планне 13 кун хушшинче 98 процент тултарнă. Комсомол организацин секретарĕ К. Осанова юлташ уйăхри плана ноябрĕн 13-мĕш тĕлнех 142 процент тултарма ĕлкĕрнĕ. Çавăн пекех А. Севрюгина—138 процент, Е. Сидякова—140 процент тултарса ĕçлеççĕ. Артельри 13 çынран вуннăшĕ яланах нормăна ытлашшипех тултараççĕ.

Çулпуç докладне сÿтсе-явнă комсомолецсемпе çамрăксем оборона фондне тĕреклетес тĕлĕшпе те ытларах ĕçлеме кирлине палăртрĕç. Халĕ нумай пулмасть вĕсем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе пуçарса ячĕç. Ку ĕçе республикăри пур комсомолецсемпе çамрăксене тата ĕçлуçăнсене хутшăнма чĕнчĕç. Вĕсен пуçарăвне республикăри ытти комсомол организацийĕсем те ырларĕç. Халĕ учрежденисемпе предприятисенчи, колхозсемпе шкулсенчи комсомол организацийĕсем ертсе пынипе пур çĕрте те бронепоезд тума укçа пухаççĕ.

Т. СКВОРЦОВ.
ВЛКСМ Чăваш обкомĕн инструкторĕ.

### Ĕç чылай лайăхланчĕ

КУСЛАВККА. Районри мĕнпур колхозсенче митингсем тата пухусем пуçса иртеççĕ. Çав пухусемпе митингсенче Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче тухса каланă сăмаха сÿтсе-явăççĕ.

Фронта пулăшассине вăйлатмалла, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем ытларах памалла, кĕске срок хушшинчех авăн çапса пĕтермелле, государство умĕнчи обязательствăсене тултармалла, — çакăн пек обязательствăсене илеççĕ колхозсем çулпуç докладне сÿтсе-явнă май.

«Динамо» колхоз членĕсен пухăвĕнче 80 çын ытла пулнă. Вĕсем Сталин юлташ доклачĕ тăрăх ăнлантарса панине пысăк тимлĕхпе итленĕ. Çулпуç чĕнсе каланине ответлесе, колхозниксем декабрĕн 10-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтерме, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарма пулнă.

«Правда» колхоз членĕсем сурри тырăсене çапса пĕтереççĕ. Т. Складкова, А. Белова, К. Рожнов тата нумай колхозниксем авăн çапнă çĕрте нормăна 2—3 хут иртерсе тултараççĕ.

Çулпуç чĕнсе каланинне ытти колхозсенчи колхозниксем те ĕçпе ответлеçĕ. Еметкино колхозĕнче юлашки вăхăт хушшинче 7 пин тенкĕ укçа пухнă. Колхоз натуроплата шучĕпе 12 центнер тырă панă. Çĕршывăн оборона фондне 10 центнер тĕштырă, 120 килограмм ашкакай, виçĕ лав тырă leçse панă. Казаково колхозĕ виçĕ кун хушшинче государствăна 52 центнер тĕштырă панă.

Районри пур колхозсенче те авăн çапасси вăйланчĕ.

В. ЧЕБУХОВ.

### Кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ

ÇЕРПУ. («Чăваш Коммуни» корр.). Сталин юлташ доклачĕ пичетленнĕ «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсене илсенех, Старах вăтам шкулĕнчи учитель-агитаторсем колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвне тухса ирттернĕç. Пухура Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада ăнлантарса панă. Кун хыççăн бригадăсенче тепĕр хут пухусем ирттернĕ, доклада сÿтсе-явнă. Колхозниксен пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ докладне сÿтсе-явнă май, хăвăртрах авăн çапса пĕтерме, декабрĕн 1-мĕш тĕлне государство умĕнчи обязательствăсене парса татма пулаççĕ.

Колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Итем çинче кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

«Чуваш ЦИК» колхоз ноябрĕн 10-мĕшĕччен авăн çатма тытăнман пулнă пулсан, юлашки вунă кун хушшинче уйри кĕлтесене çурри ытла туртарса, авăн çапнă. Çавăн пекех государство умĕнчи тĕштырă обязательствине те тултарнă. Халĕ натуроплата тыррине параççĕ.

## Танкист-гвардеецсем— Сталин юлташа

*Оборона Халăх Комиссарне Сталин юлташа*

Пирĕн ума историллĕ задача лартнă — Мускава хÿтĕлемелле, фашистла захватчиксен çулне пÿлмелле, вĕсен вăйне пĕтермелле, пирĕн тăван çĕршывăна хапăçнассине яланлăхах пĕтерсе тăкмалла.

Паян эпир правительствăран Хĕрлĕ Ялав илетпĕр. Эпир, Сталин юлташ, «Пирĕн çĕршыва ăна чуралăха чикес шутпа çĕмĕрленсе кĕнĕ немĕç оккупанчĕсене пурне те пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкмалла», тесе кăтартса панине пурнăçа кĕртессишĕн эпир, Катуков генерал-майорăн çаçĕнчи гвардеец-танкистсем, хамăрăн мĕнпур вăя, кирлĕ пулсан, хамăрăн пурăнăçа пама та хатĕр тăни çинчен шантарса калатпăр.

Пирĕн бригадăри мухтавлă танкистсем тата пехотинецсем — Совет Союзĕн Геройĕ Любушкин юлташ, Бурда, Ботрусский, Лавриненко, Вязенкин, Семохин, Загудаев тата ытти çĕршер юлташсем тăшмана хирĕç пыракан хаяр тытăçусенче Эпир «Пахалăх тĕлĕшĕнчен пирĕн танксем немĕç танкĕсенчен малта тăраççĕ, пирĕн мухтавлă танкистсемпе артиллеристсем вара немĕçсен мухтаса пĕтернĕ войскисене, вĕсен нумай йышлă танкĕсемпе пĕрлех, пĕркут кăна мар каялла хăваласа янă» тесе кăтартса панине çирĕплетсе параççĕ.

Паян эпир пирĕн бригадăри боецсем, командирсем тата политработниксем тивĕçлипе илнĕ чыслă ята—гвардеец ятне—малашне те фашистла захватчиксене вăйлăн пыра-пыра çапнипе тÿрре кăларма шантарса тупа туса калатпăр.

Хĕрлĕ Ялав илнĕ хыççăн эпир пĕр хĕрамасăр ăста йывăртарах, çавăнта каяттăр, немĕнле хăрушлăха та пăхса тăмастпăр, тăшман умĕнче шикленсе тăмастпăр, тăшмана тытса чарма тата ăна пĕтерсе тăкма мĕнпур вăя хуратпăр.

Эпир хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе хăюллăн тата паттăрăн пурнăçа кĕртсе пырăпăр, хисеплĕ ята — гвардеец ятне—чыслăн тÿрре кăларăпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă тăван çĕршыв тата геройла совет халăхĕ! Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель, юратнă Сталин юлташ!

**Боецсем, командирсем тата политработниксем хушшинпе: генерал-майор КАТУКОВ, старший батальоннăй комиссар БОЙКО.**

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ ОБОРОНИН ФОНДНЕ

Малютински мехлеспунктра ĕçлекенсем воскресникренче ĕçлесе илнĕ 4847 тенкĕ укçана оборона фондне панă.

М. СМЕТАНИН.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Тăван çĕршыв обороним фондне районри колхозсем 107 центнер тырă панă. Вăл шутран Сталин ячĕпе тăракан колхоз 30 центнер, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 25 центнер, «Двигатель революции»—16 центнер, «Красный воин»—14,26 центнер, «Красный маяк»—6,91 центнер, «Трактор» колхоз 6,65 центнер панă.

Кунсăр пуçне колхозсем сĕт-çу тата çăм параççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 12 килограмм çу, «Интернационал» колхоз 12 килограмм çу, «Оборона» колхоз 8 килограмм çăм. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 6 килограмм çăм панă.

В. ВИКТОРОВ.

## Комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникĕ

Совет Союзĕнчи хуласемпе ялсенчен нумай çамрăксем ВЛКСМ Центральный Комитетне комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне организацилеме ыйтса çырусем яраççĕ.

Челябинскри трактор заводĕнчи комсомол организацийĕ тата, ытти çĕрти организацисем пуçарса янине ырласа, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне туса ирттерме решени йышăннă. Воскресникре ĕçлесе тушă ĕç укçине пĕтĕмпех танксем тумалли фонда параççĕ.

Воскресникре мĕнле хатĕрленни çинчен тылай çĕртен хыпарсем те илнĕ ĕнтĕ. Рязань облаçĕнчи хуласемпе ялсенче комсомолецсен рабочисемпе тата служащисемпе пĕрле пустарăнакан пухăвĕсем пуласа иртеççĕ. Ку пухусенче пурте пĕр кăмăллă пулса, воскресникре пурин те хутшăнмалла текен решенисем йышăнаççĕ. Çитес воскресникре хатĕрленес ĕç Горький облаçĕнче пысăк ăнăçлăхпа иртет. Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне хутшăнма сăмах панисен хисепĕ кунта 500 пин çын таран шутланать.

Архангельск облаçĕнче воскресникре хутшăнма 30.000 çын çыраннă.

Çакăн пек пĕлтерÿсемех Совет Союзĕн ытти облаçĕсемпе крайĕсенчен те килеççĕ. (ТАСС).

# ОТЕЧЕСТВЕННАЙ АСЛА ВĂРÇАН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

## ТĂШМАН ÇĔНĔРЕН ХĔССЕ КИЛНИНЕ ПИРĔН ЧАÇСЕМ ÇИРĔППĔН ЧАРСА ТĂРАÇÇĔ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 20-мĕш. **(ТАСС спецкорр.).** Мускав патне пымалли инсетри вырăнсенче танксем тата мотопехота нумай пухса тăратса, неприятель ноябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле хăшпĕр участокренче наступлени пуçласа ячĕ. Вăтаçĕрти, çурçĕрти тата кăнтăрти участоксенче хальхи вăхăтра юн тăкăнакан хаяр çапăçусем пыраççĕ. Противник имĕнле çухатусем тунине пăхмасăрах, пирĕн оборонăна кирек мĕнле те пулин çĕмĕрсе кĕме тăрăшать, хăйĕн активлăхне вăйлатать.

Фронтăн çурçĕр участокĕнче уйрăмах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем кунта çапăçăва танксем тата авиаци нумай кĕртсе янă. Тăшман К. хули патне хирĕнсе кĕме хăтланать. Противник ноябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пуçарса янă мĕнпур атакăсене пирĕн войскăсем хирĕçле хăватлăн çапса сире-сире пăрахнă. Тăшмана кунта пысăк çухатусем кӳнĕ. Çав каçхинех пирĕн чăссенчен пĕри, танксем пулăпса пынипе, нимĕçсене хирĕç Р. пункт патĕнче контратака тунă, çакăнта икĕ ялă йышăнса илнĕ, неприятель чăсĕн пысăк штабне çапса çĕмĕрнĕ, тăшманăн çĕршер салтакĕсемпе офицерĕсене, танкĕсене, автомашинисене, мотоциклĕсемпе орудийĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен наступленийĕн малтанхи кунĕнчех О. районĕнче танксем хушшинчи хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Тăшман кунта нимĕнле ăнăçу та тăвайман. Çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсен 400 виллине, хăйĕн 4 танкне тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалне нумай пăрахса хăварса, неприятель каялла чакнă.

Çĕрле питех те йывăр çухатусем тунине пăхмасăрах, тăшман ноябрĕн 19-мĕшĕнче ирхине татах малалла хирĕнсе килме тытăннă. С. районĕнче нимĕçсем çапăçăва 50 танк, танксем хыçăн хăйсен пехотине кĕртсе янă. Çак районра пуçланса кайнă юнлă çапăçу çĕрлечченех пынă. Питех те нумай юн тăкса кăна нимĕçсем, ик-виçĕ километр малалла килсе, темиçе яла тытса илме пултарнă. Çак енчи участоксенчен пĕринче пирĕн Н-ски стрелковăй часть неприятеле хирĕç контратака тунă та тăшмана З. пункчĕн çурçĕр пайĕнчен хăваласа кăларнă.

Волоколамск енче нимĕçсем çапăçăва 8 дивизи, вăл шутра 4 танковăй дивизи, 3 пехотнăй дивизи тата тепĕр «СС» дивизине, кĕртсе янă. Пирĕн оборонăн рубежне çĕмĕрес тата совет войскисен тылне çавăрăнса кĕрес шутпа, неприятелĕн вăйĕсем пĕр труках темиçе çĕрте наступлени пуçласа янă.

П. тата Д. ялĕсен рубежĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман тискеррĕн хĕссе килнине пирĕн войскăсем çирĕппĕн чарса тăраççĕ. Пирĕн чассенчен пĕри нимĕçсене икĕ ялтан хăваласа кăларса оборонăшăн питех те усăллă рубеж йышăннă. Неприятель М. пункта тытса илме хăтланни çавăн пекех ăнăçсăр пулнă. Тăшмана пысăк çухатусем пынипе, нимĕçсене хирĕç Р. пункт патĕнче контратака тунă, çакăнта икĕ ялă йышăнса илнĕ, неприятель чăсĕн пысăк штабне çапса çĕмĕрнĕ, тăшманăн çĕршер салтакĕсемпе офицерĕсене, танкĕсене, автомашинисене, мотоциклĕсемпе орудийĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен наступленийĕн малтанхи кунĕнчех О. районĕнче танксем хушшинчи хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Тăшман кунта нимĕнле ăнăçу та тăвайман. Çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсен 400 виллине, хăйĕн 4 танкне тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалне нумай пăрахса хăварса, неприятель каялла чакнă.

Çĕрле питех те йывăр çухатусем тунине пăхмасăрах, тăшман ноябрĕн 19-мĕшĕнче ирхине татах малалла хирĕнсе килме тытăннă. С. районĕнче нимĕçсем çапăçăва 50 танк, танксем хыçăн хăйсен пехотине кĕртсе янă. Çак районра пуçланса кайнă юнлă çапăçу çĕрлечченех пынă. Питех те нумай юн тăкса кăна нимĕçсем, ик-виçĕ километр малалла килсе, темиçе яла тытса илме пултарнă. Çак енчи участоксенчен пĕринче пирĕн Н-ски стрелковăй часть неприятеле хирĕç контратака тунă та тăшмана З. пункчĕн çурçĕр пайĕнчен хăваласа кăларнă.

Волоколамск енче нимĕçсем çапăçăва 8 дивизи, вăл шутра 4 танковăй дивизи, 3 пехотнăй дивизи тата тепĕр «СС» дивизине, кĕртсе янă. Пирĕн оборонăн рубежне çĕмĕрес тата совет войскисен тылне çавăрăнса кĕрес шутпа, неприятелĕн вăйĕсем пĕр труках темиçе çĕрте наступлени пуçласа янă.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче неприятелĕн пирĕннинчен ытларах вăйĕсем хĕссе килнипе çав районра кĕрешекен совет войскисен оборонăн çĕнĕ рубежне чакса йышăнма лекнĕ. Совет танкĕсен чăсĕсем çакăнта тăшмана хирĕç хаяр контратака тунă. Пирĕн танксем хăватлăн пырса çапнине нимĕçсем тӳссе тăрайман, вĕсем çапăçу хирĕнче вилĕсемпе хĕçпăшал нумай пăрахса хăварса, чылай ялсенчен туха кайса, каялла чакнă. Пĕр Д. районĕнче кăна пирĕн танкистсем нимĕçсенне 8 станковăй тата ручной пулемет, танксене хирĕç пемелли 8 тупă тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче ирхине Можайск енче те тăшман активлă çапăçусем пуçласа янă. Кунта автострадăна тата Можайск шоссе çулне хӳтĕлекен пирĕн флангри чăсĕсене хирĕç неприятель хăйĕн пысăк вăйĕсене пухса тăратнă пулнă. Нимĕçсем пĕр труках темиçе çĕртен атака пуçласа янă. Наступлении малтанхи сехечĕсенче тăшман уйрăм участоксенче пирĕн чăссем йышăнса тăракан вырăнсене хирĕнсе кĕме пултарчĕ. Халĕ кунта йывăр çапăçу пырать. Чылай пунктсем алăран алла куçса тăраççĕ.

Захаркин командирăн чăсĕсем ноябрĕн 19-мĕшĕнче, малтанхи кунсенчи пекех, С. районĕнче тăшмана хирĕç ăнăçлă атакăсем туса пынă. К. районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Н. пункчĕ патĕнче, юлашки икĕ кун хушшинче, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 380 çын, 5 оруди, пĕр танк, пĕр зенитнăй установка, автоматсемпе пулеметсем нумай пĕтнĕ. С. районĕнчи çапăçусенче Миронов командирăн чăсĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынне пĕтерсе тăкнă, 19 станковăй тата ручной пулеметсем, 4 миномет тата ыт. те чылай тытса илнĕ.

Ефремовпа Голубов командирсен чăсĕсен участокĕнче хире-хирĕç персе тăрасси пырать. Ик енчен те вăйлăн разведка туса пыраççĕ. Ефремов командирăн чăсĕсенчен пĕри Т. районĕнче 40 нимĕçе ытла пĕтерсе тăкнă, трофейăсем чылай тытса илнĕ. Голубов командирăн чăсĕсен участокĕнче, Н. районĕнче пулнă çапăçу хыçăн, нимĕç салтакĕсен 70 виллине тупнă, танксене хирĕç пемелли икĕ оруди тата пĕр зенитнăй установка тытса илнĕ. Кунсăр пуçне Голубов командирăн артиллерис чăсĕсем тăшманăн 5 блиндажне тата 6 окопне, унта ларакан нимĕç салтакĕсемпе пĕрлех, çапса çĕмĕрнĕ, пулеметсен икĕ йăвине, икĕ наблюдательнăй пункта, минометсен виçĕ батарейине тата артиллерин икĕ батарейине çапса аркатнă.

**И. ГРИБОВ.**

## Пирĕн боецсен çапăçури паттăрлăхĕ

ФРОНТĂН КРЫМРИ УЧАСТКĔ, ноябрĕн 20-мĕш. Çĕнĕ вăйсем илсе пынă хыççăн, нимĕçсен фашистла войскисем фронтăн пур участокĕсенче те наступлени тума тытăннă. Вĕсем Д. енноллe уйрăмах пысăк вăйсем пухса тăратнă. Пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе тинĕс пехотин чăсĕсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕппĕн хӳтĕлеççĕ. Пехотинецсене пулăшма пирĕн артиллеристсем вăхăтра пырса çитнĕ. Тăшманăн войскисем пухăннă вырăн тĕлне артиллеристсем вăйлăн персе тăраççĕ.

Пирĕн çыранри оборонăн батарейисенчен пенĕ снарядсем тĕл тивнипе пысăк çухатусем тӳссе тăшманăн хăй йышăнса илнĕ икĕ пункта ирĕксĕрех пăрахса хăварма тата Н. тăвĕнчен каялла чакма лекнĕ. Çапăçу хирне тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Пирĕн артиллери персе тăнине фашистсем темиçе хутчен те чарса лартма хăтланнă, анчах та çакă вăл ăнăçсăр пулнă.

Пирĕн Н-ски батарейăн вăйĕсем çине ăнсăртран пырса тапăнас тесе фашист танкĕсен группи мала пырса тухнă. Хăюллă артиллеристсем тăшмана хирĕç вăйлăн персе тăнă. Çапăçу вăхăтĕнче батарея командирĕ йывăр аманнă пулнă. Батарейăна ертсе пыракки Соколов комиссар хăй çине илнĕ. Тăшманăн танкĕсене 400 метра çити çывăха ярса, танксем çине хăватлă вут-сулăм тăкма пуçланă. Темиçе минутăранах нимĕçсен малта пыракан танкне вут хыпса илнĕ. Унтан тăшманăн тата тепĕр танкне аркатса тăкнă, виççĕмĕш танкĕ хăварттăн каялла çавăрăнса тарнă.

Совет морякĕсен батальонĕ тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартать. Лайăх рубеж йышăнса тăракан нимĕçсен полкне хирĕç çак батальон 12-мĕш кун ĕнтĕ çапăçать. Çĕрле батальон контратака тунă. Моряксем пралук картасем патне çити çывхарсан тăшман пулеметсенчен пенĕ тытăннă. Моряксем çĕр сумне выртнă. Отделени командирĕ комсомолец Сизов, хăйĕн бушлатне хывса пăрахса пралук урлă каснă та тăшман окопĕсем патне шуса пырса, нимĕç пулеметчикĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Çакăн хыççăн противник пенĕ чарăннă. Паттăр моряксем хăйсен умне лартнă задачăна тивĕçлипех те чыслăн пурнăçланă. Моряксен çухатусем пулманпа пĕрех.

Самбурский ертсе пыракан хăюллă разведчиксем Н. ялĕн хыçне вăрттăн пырса çитнĕ. Командира пуринчен ытларах мотоциклистсемпе юлануртçăсем пырса чарăнакан çурт интереслентернĕ. Вăл çуртра паллах фашистсен штабĕ,—тесе шухăшланă Самбурский. Унăн шухăшĕ тĕрĕс пулнă.

Разведчиксем, икĕ ушкăна уйăрăлса, çав çурт çине сасартăк пырса тапăннă, фашистсем çийĕнчех нимĕн тума та пĕлеймен, çухалса кайнă. Хăюллă разведчиксем нимĕç батальонĕн штабне арканса тăкнă. Штабри офицерсем хушшинче паника пуçланнă, офицерсем хĕпăшалĕсене пăрахсах тарма тытăннă. Разведчиксем паха документсем тата карттăсем тытса илнĕ, темиçе автомашинăпа мотоциклсене çĕмĕрсе тăхнă тата нимĕçсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пирĕн совет летчикĕсем хăюллăн та паттăрăн çапăçаççĕ. Юлашки хыçне, летчик-сержант Шелямин уйрăмах пысăк паттăрлăх кăтартнă. Çĕрле пулас умĕн Шелямин Крым çийĕпе патрульре вĕçсе çӳренĕ. Тĕттĕм пулса çитсен, вăл 6 «Мессершмитт» вĕçнине курнă. Летчик атакăна кĕрсе кайнă. Тăшманăн виçĕ самолечĕ аяккалла тарăннă, ытти сисем малалла вĕçнĕ. Паттăр летчик фашистсен самолечĕсене хăваласа çитсе тапăнма шут тытнă, анчах çав вăхăтра вăл хăй хыçĕнчен татах 6 «Мессершмитт» вĕçсе пынине курах кайнă. 12 самолета хирĕç пĕр-пĕччен! Вăйсем çакăн пек танмар чухне çапăçăва хутшăнни, паллах, усăсăр. Вара летчик Шелямин, тĕттĕмпе усă курса, тăшманăн самолечĕсемпе юнашар малалла вĕçсе пынă. Хăйне валли лайăх самант суйласа илсе, вăл 15 метр тăршшĕнчен мĕнпур пулеметсенчен вутĕм тăкма пуçланă. Тăшманăн пĕр самолечĕ çавăнтах çĕр çине персе аннă. Хăш енчен персе тăнине ăнланса илеймесĕр, фашистсем хушшинче паника пуçланнă, вĕсем хăйсен малта пыракан самолечĕ çине пеме пуçланă. Тăшман самолечĕсем хушшинче çапăçу пуçланса кайнă. Çак вăхăтра Шелямин аяккарах пăрăнса пулеметран татах та тепĕр чеват персе янă. Çакăн хыççăн фашистсем хăйсен виçĕ самолетне хăйсемех персе антарнă.

Çак кунсенче, тăшманăн самолечĕсем Севастополь çине тапăнма тăнă чухне, летчик Шелямин фашистсен самолетне ирĕксĕрех бомбисене таса хире пăрахса хăварттарнă. Тăшманăн самолечĕ патне çитесси 20 метр юлсан, вăл ун çине пулеметран пеме пуçланă. Нимĕçсен çулăм хыпса илнĕ бомбардировщикĕ çĕр çине чул пек персе аннă. (ТАСС).

## Итальянецсен штабне тапăнни

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, ноябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Н-ски чăсăн разведкин Г. хулăн хĕрринче итальянецсен батальонĕ хăй штабĕпе пĕрле вырнаçса тăни çинчен пĕлтернĕ. Часть командирĕ Торчинский майор çав итальянецсен штабне тата пехотине çĕрле ташăнса пĕтерсе тăкма йышăннă.

Çак задачăна пурнăçа кĕрнине Погорелов юлташ командир пулса тăракан подразделенине хуштнă. Боевой задачăна пурнăçламалли плана малтанах тĕплĕн палăртнă хыççăн, подразделени икĕ группăна уйăрăлса, çĕрле хула хĕррине пырса кĕнĕ.

Погорелов отрячĕн пĕр группинчи боецсем штаб вырнаçнă пӳрт патне пырса тухнă та караул посчĕсене пĕр сассăр пĕтерсе тăкнă. Унтан сирпĕнтерсе ямалли средствăсемпе гранатăсене хута янă. Итальянецсен штабĕ сывлăша сирпĕнсе кайнă. Çавăн пекех çăмăл машинăпа боеприпассем тиенĕ 3 грузовика та сирпĕнтерсе янă. Штаб офицерĕсене пурне те вĕлерсе тăкнă.

Çав вăхăтрах Погорелов отрячĕн тепĕр группи итальянецсен батальонĕнчи салтакĕсем сывăракан çурта çавăрса илнĕ. Итальянецсем çине чӳречесенчен те алăксенчен те гранатăсем тăкăнма пуçланă. Хăраса ӳкнĕ салтакĕсем кĕпейĕм вĕççĕн урама тарса тухма пикеннĕ, анчах кунта вĕсене разведчиксем хăйсен автомачĕсемпе çулса тăкнă.

## Гвардеецсем

**Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ ĕçре паттăрлăх тата ăсталăх кăтартнăшăн 4-мĕш танковăй бригадăн командирне Катуков полковнике генерал-майор звание парса Ленин орденĕпе наградăланă, унăн бригадине «1-мĕш гвардейски танковăй бригада» ятне панă. Кунта эпир хисеплĕ гвардеецсен чаплă ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа паратпăр.**

Ана 4-мĕш танковăй бригадăна юлашки вăхăтра пынă хаçатсемпе документсене пырса пачĕç. Вăл пикенсех вулама тытăнчĕ те, унăн сăн-пичĕ малларах та ытларах тинкерӳллĕ пулса пычĕ.

Вăл—полковник Михаил Ефимович Катуков—çак иртнĕ юлашки талăк хушшинче танковăй войскăсен генерал-майорĕ пулса тăчĕ, ăна Ленин орденĕ парса наградăларĕç, унăн бригадине «1-мĕш гвардейски танковăй бригада» ятне панă. Вăл Правительствăн Указĕсене, Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне вуласа тухрĕ, унтан çак материалсенех тепĕр хут вуласа тухрĕ те, хăй пăлханнине пытармасăрах, тарăн шухăшлăн «гвардеецсем» тесе пăхăлтатса илчĕ.

Гвардейски бригадăн командирĕ танковăй войскăсен генерал-майорĕ Катуков тин çеç малти позицисенчен тавăрăнчĕ; унта вăл ирхине ирех кайнă пулнă. Вăл хăйĕн тĕп правилисенчен пĕрне—разведка тумасăр пĕр утăм та ярса пусмалла мар тесе каланăскерне—пурнăçа хăй кĕртсе пырать Ирхине çапăçу пуçланмалла. Вырăнпа паллашма, разведка тума, тĕпчесе пĕлме Катуков хăй тухса кайрĕ. Вăл яланах çакăн пек тунă: Орел çывăхĕнче те—кунта унăн бригади противникăн темиçе хут вăйлăрах вăйĕсене пыра-пыра çапса, пысăк çухатусем кӳнипе чапа тухнă, Мускав çывăхĕнче те—кунта вăл тăшманăн çулне пӳлсе лартнă,—çакăн пекех турĕ.

Орел çывăхĕнче бригада хӳтĕлекен участок çине тăшман хăйĕн çĕршер танкĕсене кĕртсе ярсан, Катуков вĕсене хирĕç яланхи йĕркепе кĕрешмен. Вăл кашни операцине тĕплĕн шухăпласа тунă. Ун çинчен ахальтен мар ĕнтĕ: «Пирĕн Катуков чеескер», тесе калаççĕ. Унăн бригадинче халь пĕр-пĕр танк экипажĕ çинчен, экипажри çынсем çинчен каласа тытăнсанах, чи малтан çак экипаж тăшмансен миçе танкне пĕтернине кăтартса параççĕ.

Сăмах старший лейтенант Воробьев çине куçсан, пире çапла каларĕç: «Тăшмансен 14 танкне пĕтернĕ», терĕç. Вара вĕсем мĕн калас тенине эпир часах ăнланса илтĕмĕр. Ун чухне унăн бригади гвардейски ятлă пулман-ха, анчах ку бригадăри çынсем чăн-чăн гвардеецсем, тăшмана парăничен çапăçса вилме хатĕр тăракан çынсем пулнă.

— Эпĕ хам чĕрĕ чухне машина ăшĕнчен тухмастăп, тăшмана çав-çавах аркататăп,—терĕ сержант Рындин, танк водителĕ.

Унăн танкне вут хыпса илнĕ. Рындин хăй аманнă, тиссе кайнă. Вăл машина ăшĕнчен тухса кайма пултарнă, анчах вăл ун пек туман. Вăл машинăна хыпса илнĕ çулăма сӳнтернĕ те, малалла çапăçма пуçланă. Вăл вара çĕнтернĕ.

Старший лейтенант Любушкинăн, халĕ Совет Союз Геройĕн, экипажĕ çапăçу хирĕнче фашистсен танкĕсен пысăк ушкăнĕне хирĕç пулсан, тата тăшмансен 50 машини хăйсен тупписенчен пеме тытăнсан, Любушкин хăйĕн машинине каялла çавăрман; вăл вĕсене хирĕç çапăçма пуçланă. Любушкин хăйĕн туппипе нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ.

Машина водителĕ, политрук помощникĕ Дуванов аманнă пулнă, анчах вăл хăй аманни çинчен çапăçу пĕтиччен никама та каламан, темĕн чухлĕ юн çухатнă шутпа ирĕлсе ларнă. Ун чухне вăл боец пулнă, унтанпа академирен вĕренсе тухнă та нумай вăхăт хушши танковăй соединенисен командирĕ пулса ĕçленĕ, халĕ танковой войскăсен генерал-майорĕ тата пĕрремĕш гвардейски танковăй бригадăн командирĕ пулса тăнă. «Боевой листокра» танкистсенчен пĕри çапла çырнă:

«Гудериана тылларĕ вăл Орел патĕнче,

Антив, чап çӳретĕр халăхра ун çинчен».

**Я. МИЛЕЦКИЙ.**
**(«Труд» хаçат).**

## Тула енчи хĕрӳллĕ çапăçусем

ТУЛА ЕНĔ, ноябрĕн 20-мĕш. **(ТАСС спец. корр.).** Кирек мĕн чухлĕ çухатусем пулсан та пирĕн оборонăри прорыва сарас тесе тата Ермаков командирăн чăсĕсем хыттăн тăнине çĕмĕрес тесе, фашистсем паян фронтăн Тула енчи çулахай флангĕ çине хĕссе пырассине вăйлатрĕç. Тулăран Кăнтăрпа Хĕвелтухăç енче пыракан çапăçусем ытларах та ытларах хаярланса, нумай юн тăкăнакан çапăçусем пулса тăраççĕ. Иртнĕ кунхи çапăçу çухатусем тĕлĕшпе те тата хĕрӳлĕх тĕлĕшпе те кунта халиччен пулса иртнĕ икĕ çапăçуран вăйлăрах шутланать, çухатусем тăшманăн та, пирĕн енчен те нумай пулчĕç.

Хĕрӳллĕ çапăçусем çĕр каçипех пыраççĕ. Çурçĕр иртсен 3 сехетре нимĕçсен 30 танкĕ, мотопехотăпа пĕрле, А. районĕнче пирĕн подразделенисенчен пĕрине атакăларĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтлăх фашистсен 50 танкĕ О. местечки çине пырса тапăнчĕ, çапăçу хыççăн вĕсен местечкăна тытса илме май пулчĕ. Çак участокра татах малалла кĕме пăхни вĕсен ăнăçмарĕ. Пирĕн танкистсем контратака пуçласа тăшман атакине каялла сирсе пăрахрĕç, нимĕçсене вĕсем тытса илнĕ пунктран та хуса кăларчĕç. Çак районри икĕ кун хушши пынă çапăçура фашистсен 17 танк пĕтрĕ. Çапăçу чарăнман-ха.

Паян, Терешков командирпа Корпенков комиссар чăсĕ тăракан участокра, иртенпех çĕнĕ вăйпала хĕрсе кайнă вăйлă çапăçу пырать. Нимĕçсем кунта чылай вăй пухса килсе тăратнă. Анчах вĕсен вăйĕсем пирĕннинчен ытларах пулсан та, нимĕçсем пирĕн боецсен группине каялла чакарма пултараймарĕç. Хăйсен командирĕсемпе комиссарĕн хăюлăхĕпе тата паттăрлăхĕпе хавхаланнă красноармеецсем, çирĕппĕн тăрса, хĕссе пыракан фашистсене каялла сире-сире яраççĕ.

Пĕр чăсри боецсем маттурăн çапăçаççĕ, вĕсем пирĕн оборонăна татса кĕнĕ тăшманăн танкĕсемпе мотопехота группине флангран пыра-пыра çапаççĕ. Фронтăн çакăнти участокĕнче виçĕ çун хушшинчи çапăçура фашистсенне 50 танк çĕмĕрсе тăкнă. Тăшманăн çухатусем пысăк.

Нимĕç çарĕсен командованийĕ хыпалансах çĕнĕрен çĕнĕ резервсем ярса тăрать, вĕсене, нимĕнле çухатусене пăхмасăр, çапăçăва кĕртсе малалла кайма хăвалать.

Тулăран кăнтăрпа хĕвелтухăç енчи лару-тăру йывăр. Çавах та кунти войскăсем, хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пухса хирĕç тăрса, тăшмана малалла кайма парасшăн мар паттăрăн çапăçаççĕ.

**Г. КРЫЛОВ.**

## Тăшман урса кайсах Мускав патнелле талпăнать

Мускавра тата Мускав патне пымалли вырăнсенче халĕ тĕттĕм каç тăрать. Вăрмансем катаран тĕксĕмĕн курăнаççĕ. Юрпа витĕннĕ уй-хирсемпе уçланкăсем тĕтре çанталăкра çутăлса выртаççĕ. Фронтăн линийĕ тăрăх, сылтăм флангран пуçласа сулахай флангăн хĕррине çитиех, çутă тăрать. Орудисем пенĕ чухне çутă ялтăртатса илет, нимĕçсен малти позицийĕсенче темĕн лăпкă маррине систерсе ракетăсем çутăла-çутăла каяççĕ. Вăл енчен моторсен шавĕ, гусеницăсен сасси илтĕнет. Вăрçă икĕ енчен те хĕрсе, вăйлансах пырать. Мускав патне пымалли инсетри вырăнсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Мускавшăн кĕрешӳ пырать.

Нимĕçсен ефрейторĕ Ребель пĕр эрне каярах, хăй вилнĕ кун, Германие киле çыру çырнă. «20 градус таран тăракан сивĕре, Мускав çине юлашки хут наступлени тăвас умĕн икĕ кун маларах темиçе сăмах та пулин васкаса çырса пĕлтерес терĕм сан патна. Эпир сасартăк акă юлашки наступлени пуçласа янинчен виçмине вырăссем тĕлĕнсех кайĕç», тесе çырать вăл.

«Юлашки наступлени»! Гитлерла каппайчăксем тата Гитлер хăй те «юлашки наступлени» тесе миçе хутчен кăна пĕлтермерĕç пулĕ Гитлер бандичĕсем акă халĕ ку хутра та ефрейторсемпе тăксăн пуçĕсене: «çакă вăл юлашки наступлени пулать» текен сăмахсемпе чыхса тултарнă. «Сывхарса килекен событисене, ăраснах хĕле кĕнине тата çар валли тĕрлĕрен материалсем тăратас ĕç япăхса кайнине шута илсе, нимĕне пăхмасăрах, совет Мускавне çывăх вăхăтрах тытса илме хушатăп», тенĕ Гитлер хăйĕн приказĕнче. Çав приказ хыççăн фашистла бандăсем Мускав çине наступлени тума пуçларĕç. Нимĕçсем акă çак çурçăр пирĕн столица патнелле талпăнаççĕ. «Нимĕне пăхмасăрах» тенине асра тытса, нимĕçсен командованийĕ çапăçăва хăйсен мĕнпур танковăй дивизийĕсенчен çурринне ытла пирĕн Хĕвелăнăç фронтне хирĕç кĕртсе янă, нимĕçсем унта хăйсен мĕнпур резервĕсене илсе килнĕ. Вĕсем хăйсен планăсене çитнĕ тактикипе флангсенчен пырса çапаслăн. «Нимĕне пăхмасăрах» тенине асра тытса, нимĕçсен командованийĕ хăйĕн салтакĕсене: Мускава туртса илнĕ хыççăн çийĕнчех çĕнтерӳллĕ мир пулать тесе шантарса, атакăна кĕртсе ярас умĕн ăрех ĕçтерет. Паян çавтери ӳсĕр нимĕç салтакĕсем, тискер кайăксем пек çухрашса, пĕтĕм кĕлеткипе тăрса пирĕн позици çине, пирĕн пулеметсен вучĕ çине пырса тăрăнчĕç. Под. полковник Коновалов чăсĕнчи ручной пулеметчиксенчен пĕри 150 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ. Çавăн çинчен пире халь çеç çапăçу хирĕнчен килнĕ лейтенант Маклаков каласа панĕ.

Нимĕçсем, темĕнле пысăк çухатусем пулласса та пăхмасăр, Мускав патнелле талпăнаççĕ. Иыш тĕлĕшпе вăй нумай пулнă пирки тата танксем нумайрах пулнă пирки, тăшман хăшпĕр вырăнсенче пирĕн чăссене хĕсме пултарчĕ. Октябрьти юнлă çапăçусем хыççăн кăшт вăхăт иртсен, Мускава хӳтĕлемелли инсетри рубежсем çинче халĕ каллех положени йывăрланса килчĕ. Тăшмана çапса аркатас тесен,—халĕ ĕнтĕ кашни Совет патриочĕнех хăйĕн мĕнпур вăйне пухас пулать. Çакна та асра тытса тăрас пулать: тăшман Мускав патне хăйĕн резервĕн нумай пайне илсе пырса тултарнă. Мускав патĕнче тăшманăн тискер çарĕсене çапса салатни—гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкас ĕçĕн пуçламăшĕ, пирĕн çĕнтерĕвĕн пуçламăшĕ пулса тăрать.

Мускав патĕнче обстановка йывăрланса килнине пирĕн фронтовиксем пĕтĕмпех ăнланаççĕ. Ĕçсе супнă ылханлă тăшмансем пире хĕсме хăтланаççĕ, анчах та пирĕн фронтовиксем оборонăра çирĕппĕн тăраççĕ, тăшмана хирĕç хаяр контратакăсем тăваççĕ, нимĕç оккупанчĕсене нимĕн шеллемесĕр пĕтере-пĕтере пыраççĕ.

Хĕвеланăç фронтĕнчи пур участокренче те пирĕн фронтовиксен—совет патриочĕсен геройĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Н-ски чăсри танкистсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен икĕ пин те 500 салтакĕпе офицерĕсене пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 35 танкне, 80 ручной тата станковăй пулеметне пĕтернĕ тата стройран кăларнă. Çав чăсри ротăсенчен пĕрин политрукĕ Савкин тата старший сержант Князев, пирĕн танксем хыççăн пырса, фашистсен салтакĕсем çине çавтери хăюллăн тапăннă, вĕсем çине гранатăсем вăркăнтарма пуçланă. Нимĕçсем хушшинче паника пуçланнă. Çавăнпа усă курса, Савкинпа Князев юлташсем противникăн икĕ орудине тытса илнĕ, вĕсене тăшман çинелле çавăрса тĕл персе, нимĕçсен темиçе вунпăр салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Çавăн хыççăнах Князев юлташ виçĕ боецпа пĕрле разведкăна кайнă. Нимĕçсем пирĕн разведчиксене хупăрласа илнĕ пулнă. Анчах пирĕн паттăр та хăюллă разведчиксем нимĕçсене хирĕç çапăçса 12 нимĕçе персе вĕлернĕ тата минăсем тултарнă ещĕке, патрунсем хунă 120 лентăна туртса илнĕ, вара хăйсен чăсне пурте сывах таварăннă.

Хăйсен паттăрлăхĕпе хăюлăхне пĕр вĕçĕмех кăтартса пынă Рокоссовский чăсĕсем халĕ те тăшмана хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ, тăшмана ним шеллемесĕр пĕтере-пĕтере пыраççĕ. Н-ски дивизири боецсем пĕр кун хушшинчех противникăнне 4 миномет, 3 станковăй пулемет, 16 çăмăл пулемет тытса илнĕ. Н. ялĕ патĕнчи çапăçусенче 5 оруди, танкетка тата зенитнăй установка тытса илнĕ.

Фронтăн пур участокĕсенче те фронтовиксен мухтавлă ĕçĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Анчах çав геройла ĕçсем хушшинче те кĕçĕн политрук Бармин экипажĕн геройла ĕçĕ ăраснах палăрса тăрать. Çак экипаж виçĕ хутчен атакăра пулса тăшманăн машинисене сахал мар çунтара-çунтара янă е стройран каларнă. Оборонăн питĕ те кирлĕ участокĕшĕн çак кунсенче пулса иртнĕ çапăçура Бармин юлташ тата унăн паттăр юлташĕсем тупа тунă: хамăр вилесрен те хăрамастпăр, анчах çак участока сыхласа хăварапăрах, тенĕ вĕсем. Бармина хирĕç немĕçсем 40 танк кĕртсе янă. Геройла экипаж тĕл персе çавтери вăйлă вут-хĕм тăкма пуçланă. Фашистсен 5 танкне çав самантрах вут хыпса илнĕ, ытти сисем каялла çавăрăнса тарнă.

Фашистсен çарĕ хĕссе пыма хăтланнине хирĕç пирĕн фронтовиксем нимĕн хăрама пĕлмесĕр çапăçаççĕ. Мускава хӳтĕлеççĕ, вĕсем Совет патриочĕн чаплă туйăмĕсемпе хавхаланнă.

Çапăçусем хушшинче канмалли вăхăтсем пулсан, пирĕн мухтавлă фронтовиксем аслă та тăван Сталинăн докладĕпе сăмахне тĕплĕн вĕренме тытăнаççĕ. Сулпуçăн сăмахĕсем вĕсене çĕнĕ вăй параççĕ, паттăр пулма чĕнеççĕ.

Мускав патнелле тăшман урса кайсах талпăнать. Фронтовиксем тата мĕнпур совет çыннисем пирĕн столица умне тухса тăнă хăрушлăха витĕрех ăнланса илсе, çĕнĕрен те çĕнĕрен паттăр ĕçсем туса ямăç захватчикĕсене пурпĕрех çапса аркатаççĕ.

**Вл. СТАВСКИЙ.**
**(«ПРАВДА», ноябрĕн 21-мĕш).**

## Совет патриочĕсен фронта янă çырăвĕсем

Фронтри кашни участок тылпа çирĕп çыхăнса тăрать. Фабрикăсемпе заводсенчен, колхозниксенчен, рабочи поселоксенчен тата ытти вырăнсенчен фронтри малти позицисене — тăван çĕршыва сыхлакан боецсемпе командирсем патне пиншер çырусем килсе тăраççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем, пичĕшĕсемпе йăмăкĕсем, тăванĕсем хăйсен çырăвĕсенче тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешме чĕнсе çыраççĕ.

Фашизма хирĕç çапăçакан боецсене ăшшăн юратни, ирĕклĕ совет халăхне чура туса хума ӳмĕтленекен тăшмана тĕппипех çапса салатассине шанни кашни йĕркепе сăмахрах палăрать.

Старший лейтенант В. Ботоевăн ашшĕ ывăлĕ патне çапла çырать:

«Хаклă ывăлăм! Эпĕ ĕнтĕ 60 çултан та иртнĕ, анчах çавах та хама çамрăк çын пек туятăп, кашни ытлашши минутăна çар ĕçне вĕренме паратăп, кирлĕ пулсан, ыранах алла пăшал тытса тăван çĕршыва сыхлама хатĕр. Манăн ывăлăмăрсем, эсир тăватсăр та тăшмана хирĕç çапăçатăр. Хăвăн пурнăçна шеллемесĕр тăшмана хамăр çĕр çинчен хăваласа кăларичченех çапăçасса шанса тăратăп».

Красноармеец Владимир Логвинов юлташ подразделенире паттăр красноармеецсен шутĕнче тăрать. 1940 çулта Логвинова ашшĕ армине ăсатнă чух, примерлă тата дисциплинăллă боец пулма, çар ĕçне тăрăшса вĕренме наказ панă.

Çак кунсенче Владимир ашшĕнчен çыру илчĕ.

«Сывă-и, Володя! Кубаньрен сана питĕ пысăк салам яраттăр! Тăшмана çапса сал

# Агитпунктăн ĕçĕсем

ЕТĔРНЕ. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра Етĕрне райкомĕн агитпунктĕ хăйĕн ĕçĕсене тĕпренех çĕнетрĕ. Агитпунктăн лекторсен группи 9 çынран тăрать. Кунтах тата докладчиксен коллективĕ пур. Агитпункт вĕсемпе час-часах канашлусем тата семинарсем туса ирттерет. Ку семинарсенче халăх хушшинче туса ирттерекен докладсемпе лекцисен формисем, меточĕсем тата содержанийĕ мĕнле пулмалли çинчен ăнлантарăççĕ, лайăх ĕçлекен докладчиксемпе лекторсен ĕçĕсемпе паллашăççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа çакнашкал семинарсемпе канашлусем 23 хутчен туса ирттернĕ. Кусемсĕр пуçне агитпункт докладчиксемпе агитаторсене уйрăмăн 168 консультаци панă.

Агитпункт докладчиксене докладсем тума тема парать, мĕнле литературăпа усă курмаллине кăтартать. Агитпункт библиотеки лекторсемпе докладчиксене кирлĕ литература парса тăрать.

Лекцисемпе докладсене уйрăмăнах райсовет исполкомĕн председателĕ Агеев, райком пропагандисчĕ Сенина, хула совет председателĕ Вяткин, Ядринори вăтам шкул директорĕ П. Данилов, Кочетова, Трофимов т. ыт. чылай юлташсем тĕплĕн хатĕрленсе ирттереççĕ. Çакна пула вĕсен лекцийĕсемпе докладĕсем интереслă пулаççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа агитпункт пурĕ 195 лекци тата докладсем туса ирттернĕ, вĕсене 19 пин çын ытла итленĕ. Лекцисемпе докладсене, ĕçсыннисем ыйтнă тăрăх пуринчен ытларах истори тата оборона темисемпе туса ирттереççĕ. Çав хушăрах ПВХО тата ГСО ĕçĕсене вĕрентес енĕпе те чылай докладсем тунă.

Кусемсĕр пуçне агитпункт докладчиксем кашни колхозрах оборона фондне тăвас, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ, хулари, заводсенчи çамрăксемпе тата килхуçи хĕрарăмĕсемпе уйрăм пухусем туса ирттернĕ. Мускавра пулса иртнĕ çамрăксен тата хĕрарăмсен фашизма хирĕçле митингĕсем чĕнсе каланисемпе паллаштарнă. Çакăн хыççăн районри çамрăксем тăрăшса ĕçлеме, кирек мĕнле ĕçе те кĕске срокра тума, стахановец-двухсотниксен йышне ӳстерме, вăрçă ĕçне тăрăшса вĕренме сăмах панă. Халĕ ĕнтĕ çамрăксем хăйсен сăмахне ĕçпе пурнăçласа пыраççĕ. Район центрĕнчи медсестрасен курсĕнчен 30 хĕрача, трактористсен курсĕнчен 32 хĕр вĕренсе тухнă. Халăхла ПВХО нормисем пама вĕрентессине комсомолецсем хăйсем çине илнĕ. Ту-Мучарти Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолец Емельянов хăй вăйĕпех 55 колхозника ГСО значокĕн нормисене, 19 колхозника ПВХО значокĕн II сыпăкăлă нормисене пама вĕрентсе хатĕрленĕ. Кăташ ялсоветĕнчи колхозсенче комсомолка-акушерка Е. Шушканова 200 çынна ГСО кружокĕсенчен вĕрентсе хăларнă.

Докладчиксем хăйсен доклачĕсене практикăллă ĕçсемпе çыхăнтараççĕ. Çакна пула районра

# Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх çинчен Черчилль тата Иден калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи обществăллă çыхăнусем тĕлĕшпе ĕçлекен комитета, çĕршыври çаллă обществăллă деятельсем нумай пулмасть организациленĕскерне, Черчилль послани янă. Комитет туса пыракан ĕçе Черчилль чĕререн саламласа ырă суннă. Çав послание комитет Майский тата Иден ячĕпе туса ирттернĕ йышăнура вуласа панă. Черчилль хăйĕн посланийĕнче çапла каланă: «Эсир хăвăр умма лартакан тĕллеве тата çав тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе туса пыракан ĕçе эпĕ хавхалансах ырлатăп. Комитет пĕтĕçтерсе тăракан обществăллă шухăшсен вăйĕ питех те пысăк пулассине тата вăл пирĕн обществăн нумай тĕрлĕ сийĕсене çавăрса илессине эпĕ шанатăп, çакă вăл пирĕн вырăс союзниксемшĕн вĕсен пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче питех те пысăк пулăшу пани пулĕ».

Майский тата Иден хăйсен çак йышăнура тухса каланă сăмахĕсенче Великобританипе Совет Союз хушшинче тата та туслă çыхăну пуррине палăртă тунă.

Иден çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери политикăн тĕп ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ССР Союзĕпе Великобританин интересĕсем хушшинче кирĕçусем пулма нимĕнле сăлтав та сукки тĕрĕс пулнине эпĕ вĕсене çитиех ĕненсе тăратăп», тенĕ. Кунта Иден хăй 1935 çулта Мускава килсе кайнă чухне Сталинпа тата Литвиновпа тĕл пулса калаçнисене тата çавăн чух икĕ çĕршывăн правительстви пĕрле панă коммюникене аса илнĕ. Çав коммюникере тĕнчери политика ыйтăвĕсем тĕлĕшпе икĕ правительство хушшинче нимĕнле хирĕçу те сукки çинчен кăтартса панă пулнă. 1935 çулта мĕн каланине 1941 çулта фактсемпе çирĕплетсе панă, тата çакă вăл малашне те çирĕпленсе пырĕ. «Эпир — Великобритани çыннисем — Совет Союзĕпе хальхи вăхăтра та, çавăн пекех вăрçă хыççăн та тачă çыхăну тытса пурăнасшăн. Вăрçă хыççăн пирĕн татах та мир ĕçĕсемшĕн тăрăшмалла пулĕ», — тенĕ вăл.

Хальхи вăрçăра Германие хирĕç пĕрле кĕрешесси çинчен çăлăхи июль уйăхĕнче Англипе Совет Союзĕ хушшинче пакт тунăранпа пирĕн пĕрлĕхе сĕнĕ событисем тĕреклетсе çирĕплетрĕç. Вырăс салтакĕн яланхи паттăрлăхĕпе çирĕплĕхĕ, унăн хастарлăхĕ çакă юлашки пилĕк уйăх хушшинче пулнă хăяр испытанири пек халиччен нихăçан та ыççăн курăнса тăман.

«Çав кĕрешӳре,— тенĕ Иден,— пирĕн пĕр ĕç, кунта пĕр-пĕрне пулăшу парса тăни вăл хамăра пулăшу парса тăни пулать. Пирĕн ресурссем Россинăн ресурсĕсем пулса тăраççĕ, Россинăн ресурсĕсем вара — пирĕн ресурссем. Россинăна хĕçпăшалпа боеприпассем тата самолетсем турттарса каякан суднăсем Россинăран хамăр патне Англин çар вăйĕсем валли паха чĕртавар турттарса килеççĕ. Эпĕ хамăн пĕтĕм чĕрери кăмăлтан Англи халăхне çакна шантарса каласшăн: ăçта наступлени пуçласа яма май килнĕ, çавăнта пур çĕрте те, сăмахран Ливире, наступлени тăватпăр. Çак наступление эпир Хĕрлĕ Çар Германи çарĕсене тата ун тарçисен çарĕсене хирĕç контратакăсем тунă самантра, тăшман малалла каяссине чарса пынă самантра тăватпăр».

Иден малалла çапла хушса каланă: «Эпĕ малтанах курса тăратăп, Совет Союзĕпе Англин интересĕсем чылай тĕлĕшрен пĕр-пĕрне çĕнĕ вăй парса пырĕç, пирĕн çĕршывсем пĕр-пĕринпе кĕвĕçекен çĕршывсем пуласси çинчен эпĕ шухăшлама та пултараймастăп. Мĕнпур ирĕклĕ нацисен пĕр тĕллев пур, çав тĕллев вăл—Германин вăрçă хăватне пĕтĕрсе тăкасси, çав вăрçă хăватне мĕнпур тĕнчери мирлĕ йĕркепе улăштарасси пулса тăрать».

Иден Майский çинчен питех те ырă сăмах каланă. «Майский,—тенĕ Иден,— пирĕн икĕ халăх хушшинче пĕр-пĕрне ăнланса тăракан тачăлах сыхăнусем тăвассишĕн питех те нумай тата çине тăрса ĕçлерĕ. Унăн задачи çăмăлах пулман, анчах вăл пур чухне те хăй çĕршывĕн тата пирĕн çĕршывăн чăн-чăн тусĕ пулăн, калас пулать, нименлĕ посолран та çакăнтан ытларах ыйтма çук».

Майский хăйĕн сăмахĕнче, Великобританипе Совет Союзĕ, хăйсен союзникĕсемпе пĕрле, Европăн нацистсем оккупациленĕ çĕршывĕсенчи халăхсен ӳссе пыракан вăйĕсем пулăшнипе тата Америка туслăн пулăшса пынипе пĕтĕмлĕ тăшмана пĕрле çĕнтересси не çирĕппĕн шанса тăни çинчен каланă.

«Германие,—тенĕ Майский,—континент çинче кăна пуçĕпех çĕнтерме пулать, çавăнпа та союзниксенчен кашнин ĕнтĕ çав тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмалла. Германи çарне пуçĕпех çапса çĕмĕрсе, пĕтерсе тăксан кăна гитлеризм хăратса тăнине татăклăн сирсе яма пулать».

Совет правительстви хушшипе Майский панă çыравă йышăнура лорд Хордер вуласа панă. Çырура çапла каланă: «Великобританипе Совет Союзĕ хушшинчи туслă та тачă çыхăну вăрçă вăхăтĕнче те, çавăн пекех вăрçă пĕтнĕ хыççăн та питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине эпир вĕсене çитичченех ăнланатпăр. Пирĕн пĕтĕмлĕ кĕрешĕве çĕнтерӳ патне çитичченех туса пыма тăрăшакансем çине Совет правительстви кăмăлласа пăхать тата сирĕн паянхи пухăва пысăк ăнăçлăх сунать»—тенĕ.

# Галифакс тухса калани

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин США-ри посолĕ Галифакс Оттавра Канада советĕнче сăмах тухса каласа, çапла пĕлтерĕ: Совет Союзĕ вăйлăн хирĕç тăни Гитлер палăртнă программăна тата унăн ултавлă наступлени планĕсене аркатса ячĕ. «Пирĕн, — тенĕ Галифакс, — çынсемпе тата майсемпе ирĕклĕнех усă курмалла тума вăй пухас пулать».

Россия, — тенĕ малалла Галифакс,— нацистла çар машини пырса çапнине хăй çинче тӳссе, çав вăхăтрах тăшмана питех те пысăк сиен кӳчĕ. Россия хирĕç тăнине тата унăн пултарулăхне хаклама сăмахсем тупма та йывăр. Салтăксем, рабочисем хресченсем, пур çулăхи арçынсемпе хĕрарăмсем те вырăс çĕрĕ çине сĕмĕрсе тĕнче захватчика хирĕç кĕрешме пĕрлешрĕç, вĕсем Гитлер предательле наступлени туса пыма палăртнă расписание аркатса ячĕç. Октябрĕн 3-мĕшĕнчех Гитлер пурте илан тăрăх пулса пырать тата Россинăна çĕмĕрсе тăкнă, тесе мухтанăччĕ. Пĕр эрне иртсен, Гитлерпа курса калаçнă хыççăн Дитрих Россия хĕçпăшалпа хирĕç тăнине пĕтерсе тăкнă, тесе пĕлтернĕччĕ: Ултă эрне иртсен Гитлер çĕнĕрен сăмах тухса каланă: Ултă эрне вĕçленнĕ тĕле те Мускав тата Ленинград нимĕçсем йышăнса илессинчен аякра тăнă, çавăнпа Гитлерăн хăйĕн сăмахне кăштах йăваштламалла пулнă.

Çакăн çине, паллах, нимĕç халăхĕ çавăрăнса пăхмасăр иртсе кайма пултараймасть. Халхи вăхăтра нимĕç халăхĕ икĕ пин миль тăршшĕ фронтра йывăр та хаяр условисенче Россинăпа хире-хирĕç тăрса çапăçать. Анчах вăрçă хăçан пĕтесси пăхса мурăнмасть-ха.

Галифакс малалла, гестапон меслечĕсем Германин питех те пысăк çухатăвĕсене нимĕç халăхĕнчен пытарма пултараймаççĕ, тесе палăртнă. Нимĕçсем вăрçăн виççĕмĕш хĕлне кĕресси умĕнче тăраççĕ, вĕсем Англи авиацийĕ Германи авиацийĕпе пĕр пекех шутлине пĕлсе тăраççĕ, вĕсем Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулăшнипе Англин сывлăш флочĕ ерипенех Германи флотĕнчен иртсе каяссине пĕлсе тăраççĕ.

Юлашкинчен Галифакс çĕнтерӳ тума хĕçпăшалсене йышлăн туса кăларма чĕннĕ.

# Черчилль посланийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрĕ Черчилль Хĕвеланăç Африкăри çарпа авиацин личнăй составне, çавăн пекех тата Вăтаçĕр тинĕсĕнчи флотăн личнăй составне чĕнсе калакан послани янă. Ку послание вăл Англи çарĕсем çитес вăхăтри пит те пысăк вырăн йышăнса тăракан çапăçусенче хăйсен ĕçĕсене чунран тăрăшса пурнăçа кĕртсе пырĕç, тесе шанса çырнă.

# Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ пани коммюнике

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн коммюникинче çапла каланă: Англи çарĕсем Резеск ятлă пункта йышăннă. Çав пункт Тобрук оборонин линийĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырнаçса тăрать.

Тобрук енне пырса Англин бронетанковăй чăçĕсем Бир-Эль-Гоби районĕнче Италин бронетанковăй чăçĕсемпе тĕл пулнă. Противникăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă, 150 салтакне тытăпа илнĕ. Капуццоран 50 километр хĕвеланăçнерех нимĕç танкĕсем курăннă. Анчах Англи танкĕсене курсанах вĕсем каялла кайнă. Халфай хушшипе Сиди-Омар оазисĕ хушшинчи участокра Англи çарĕсем малалла хĕссе пыраççĕ. Операцисем пĕтĕм фронт тăршшĕпех ăнăçлăн вăйланса пыраççĕ. Ноябрĕн 20-мĕшĕнче операцисем çĕр çинчи вăйсемпе сывлăшри вăйсем пĕр-пĕрне тачăн пулăпса тăнипе пулса пынă. Противник танкĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Англи бомбардировщикĕсем противникăн аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Нумай самолетсене пĕтерсе тăкнă, вăл шутра пилĕк машина—«Юнкерс—82» йышшисем, икĕ машина — «Мессершмитт—109» йышшисем. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин Вăтаçĕр тинĕсри флочĕн подразделенийĕсем вăхăчĕ-вăхăчĕпе Ливи çыранĕсене персе тăнă. Линейнăй карапсем хăйсен флагманĕпе пĕрле халĕ тинĕс çинче. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче çĕрле пĕр крейсер Халфай хушшинчи вырăн тĕлне персе тăнă.

# Иден тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Лондонри обществи тунă йышăнура Англи ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден тухса каланă. Вашингтонра Японипе Америка хушшинче пыракан калаçусем çинчен асăннă май, Иден çапла каланă: «Çав калаçусем чăннипех те Лаптăк океан бассейнĕн мĕнпур пуласлăхне пырса тивеççĕ. Калаçусенче асăнакан районсенче пирĕн хамăра тӳрремĕн пырса тивекен пысăк интерессем пур, çав районсенче пирĕнпе тăванлă халăх пурăнать. Мана правительство ячĕпе çакна калама ирĕк парăр: Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствин представительне эпир ырă сунатпăр, ăна вĕсене çитиех шанса тăратпăр. Эпир ăна шанни çавтери пысăк. Çавăнпа та çав калаçусенче пирĕн представитель те пултăр тесе эпир нихăçан та ыйтман, халь те ыйтмастпăр. Эпир хамăр туссене шанатпăр»,—тенĕ.

# Сикорский заявленийĕ

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 19-мĕш. (ТАСС). «Чикаго дейли ньюс» хаçатăн корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сикорский генерал интервью панă. Вăл çапла каланă: халĕ Совет Союзĕнче поляксен 150 пин çынтан тăракан çарĕ Англирен тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен хĕçпăшал килессе кĕтсе тăрать. Сывăх Хĕвелтухăçĕнче Англи çарĕсемпе пĕрле поляксен 48 пин çынтан тăракан çарĕ çапăçать. Сикорски генерал тата çакна палăртса хăварнă: хальхи вăхăтра Польша авиацийĕ вăрçă пуçланнă вăхăтринчен 6 хут вăйлăрах, тенĕ.

Малалла Сикорский çапла каланă: Гитлера хирĕç пыракан вăрçăра Совет Союзĕпе Польша пĕр шухăшлă пулса тăшмана хирĕç çапăçни вăл çак икĕ çĕршыв хушшинче туслăхлă çĕнĕ эрăна пуçласа яни пулать тесе шанатăп, тенĕ.

Польшăри лару-тăру çинчен каланă май Сикорский çакна асăрхаттарса хăварнă: Польша çĕрне тытса илнĕренпе нимĕç оккупантчĕсем 82 пин поляка асаплантарса вĕлернĕ. Генерал-губернаторствăран Германи оккупантчĕсем 200 пин поляка хăваласа кăларса янă. Германие ирĕксĕр ĕçлеттерме поляксене пĕр миллион çын ытла хăваласа кайнă.

# Сикорский генерал Тобрукра пулнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Польша çарĕсен главнокомандующийĕ генерал Сикорский пĕр талăк хушши Тобрукра пулса ирттернĕ. Унта ăна Англи войскисемпе пĕрле тăракан Польша войскисем пысăк хаваслăхпа йышăнса илнĕ. «Ньюс кроникл» хаçатăн Тобрукри корреспонденчĕпе калаçнă чух Сикорский çапла каланă: «Кунта тăракан манăн çар çыннисен шухăш-кăмăлĕ, эпĕ хам кĕтнĕ пекех, пит те лайăх. Çавăн пекех эпĕ Тобрукра тăракан Польша войскисемпе пирĕн союзниксен ытти войскисем хушшинчи килĕшӳлĕх кăмăлĕ те пит те лайăххине палăртатăп. Кунта хам мĕн курнисем хыççăн манăн çапла калас килет: Тобрука тăшман илме пултарас çук», тенĕ.

Сикорский малалла корреспондента Польша войскисене Тобрука вăл хăй хушнипе яни çинчен каласа панă. Юлашкинчен вăл: «Хăшпĕрисем Польша Италие хирĕç мар, Германие хирĕç кăна вăрçать, тесе вырăнсăр калаçнисене эпĕ хам пĕтĕмпех чарса лартнă пулăттăм. Кам Германи енче çапăçать, вĕсем пурте Польшăн тăшманĕсем пулса тăраççĕ»,—тенĕ.

# Мускав районĕнче Германи батальонне çапса аркатни çинчен нацистсен хаçачĕ мĕн çырать

Фронтăн центрти участокĕнче «çиçĕмле хăвăрт» наступлени тумалли план пĕтсе ларнине тӳрре кăларас тесе, Германи пичетлĕ юлашки кунсенче нимĕçсен Хĕвелтухăçĕнчи çарĕн ĕçĕсем йывăрланни çинчен ыççăнах çырма тытăнчĕ. Тĕслĕхрен илсен, «Берлинер берзенцейтунг» хаçатăн çар корреспонденчĕ: «вырăссем Мускава çав тери хытă хӳтĕлеççĕ, Германи дивизийĕсен атакисене хирĕç вĕсем хăватлă танксемпе тухса контратакăсем тăваççĕ» тесе çырать. Мускав патне пымалли вырăнсенчи вăрçă эпизодне илсе кăтартса корреспондент çапла çырать: «Германи пехоти сивĕпе тата йĕпе çантăлăкпа чĕтресе, сехечĕ-сехечĕпе окопсенче ĕнтĕркесе ларать. Тул çутăласпа эпир каллех вырăссен тарăхтаракан «урра» кăшкăрнă сассине илтетпĕр. Халиччен-хи вăрçăсене çак ирхине пуçланнă çапăçупа танлаштарсан, вĕсем пурте тĕсĕрленсе юлаççĕ. Большевиксем пирĕнпе юнашарти нумай çухатусем тӳснĕ батальон позицине йышăнса илчĕç. Çул çинче вунă пысăк танк курăнса кайрĕ. Вĕсем танксемпе пирĕн орудисене пуса-пуса лапчăтаççĕ, обозсене, пулемет йăвисене тата гранатометсене çĕмĕрсе хăварасçĕ. Артиллеристсен наблюдателĕн радиопередатчикне снаряд пырса ӳксе аркатать. Боеприпассем пĕтсе пыраççĕ. Пирĕн лару-тăру начарланать. Танксенчен пĕри пирĕн батальон штабĕ тăракан çурт çине пырса кĕрсе ăна çĕр çинчен сирсе тăрахать. Çак вăхăтрах пирĕн çине совет пехоти тапăнса пырать. Большевиксем автоматсенчен переççĕ. Вĕсен власне хирĕç чăтса тăма çук. Пирĕн стрелоксем пĕрин хыççăн тепри ӳкеççĕ. Пирĕн батальонран эпир